«Инçетре, Германи çĕрĕнче…»

Инçетре, Германи çĕрĕнче,
Уçă шуçăмла иркӳлĕм
Ман ӳте пĕр тимĕр тирĕнчĕ.
Юнăм çунăхрĕ хĕрӳллĕн.

Ӳкрĕм те пустав çерем çине,
Курăка хĕретрĕ юнăм.
Туйрăм вăйăм-халăм чакнине.
Темшĕн кăшт хурланчĕ чунăм.

Çав самант – нихçан манассăм çук –
Хĕр васкавлăн чупса пычĕ.
Вăйлăн-вăйлăн çиçĕм çиçнĕ чух
Улшăнмарĕ ун сăн-пичĕ.

Вăл-çке хăнăхнă хĕр аллипе
Сурана тирпейлĕн çыхрĕ.
Ăнсăртран çеç çăлтăр куçĕпе
Куçăмран чĕнмесĕр пăхрĕ.

Хĕр васкарĕ тепĕр çын патне...
Астăватăп – манас марччĕ:
Куçĕсем юратнă хĕр ятне
Асăнма хушса хăварчĕç.

*1945*

*Алка, А. «Инçетре, Германи çĕрĕнче…» : [сăвă] / А. Алка // Паттăрлăх кунĕсем. – Шупашкар, 1995. – С. 43.*